АСТӐВӐМ



# Нумай енпе аталаннӑ ӗҫчен

Кӑҫалхи нарӑсӑн 26-мӗшӗнче пирӗн вӑхӑтри паллӑ ҫыравҫӑ, ӑста ӳнерҫӗ, Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, «Тӑван Атӑл» журналӑн тата чӑваш тавра пӗлӳҫисен Алексей Милли ячӗллӗ премийӗн лауреачӗ В.Сидоров-Эктел 60 ҫул тултармаллаччӗ. Шел, шӑпи ӑна 2005 ҫулта пирӗнтен яланлӑхах уйӑрса кайрӗ.

Вӑл – манӑн шӑллӑм. Юлашки вӑхӑтра куҫ умне час-часах унӑн ачалӑхӗ тухать. 6-7 ҫулта чухнех Вася килте, уйрӑмах пахчара атте-аннене пулӑшма тӑрӑшатчӗ. Тарӑн ҫырма хӗрринчи пирӗн пысӑк пахчара ҫӗр улмисӗр пусне темиҫе йӑран хӑяр, купӑста, кӑшман, сухан, помидор, редис тата тем те пӗр ҫитӗнетчӗ. Ҫуллахи шӑрӑх ҫанталӑкра вӗсене шӑварма шыв питӗ нумай кирлӗ. Ҫавӑнпа эпир, аслӑ ывӑлӗсем, 100-150 метрта вырнаҫнӑ пӗвене ирӗн-каҫӑн тенӗ пек хутлаттӑмӑр, вун-вун витре шыв йӑтнӑ. Мӗн чухлӗ йӑрана ҫум курӑкран тасатман пуль тата.

Иртнӗ ӗмӗрӗн 50-мӗш ҫулӗсен варринче пирӗн атте – Елчӗк районӗнчи Лаш Таяпари вӑтам шкул учителӗ П.В. Сидоров – вырӑнти «Слава» колхозӑн сад пахчине пӑхса тӑма тата унта утарта ӗҫлеме килӗшнӗччӗ те эпир каникул кунӗсенче тӑршшӗпех унпа пӗрлеччӗ.

Вася манран тӗслӗх илсе мӗн пӗчӗкрен физкультурӑпа спорта юратса ӳсрӗ. Ҫуллахи вӑхӑтра каҫхи апат умӗн ҫерем ҫинче мечӗк хӑвалама (футбол евӗр вӑйӑ), тӑршшӗне е ҫӳллӗшне сикме, пӗр-пӗринпе кӗрешме, ӑмӑртса чупма юрататтӑмӑр. Хӑш-пӗр чух пирӗн туслӑ-тӑванла тупӑшусене кӳршӗри юлташсем те – Николай Салмин,

Алексей Павлов, Кронид Свиягин, Николай Арефьев, Владимир Гордеев тата ытти хастар та ҫивӗч шкул ачисем хутшӑнатчӗҫ.

Хӗл ларсанах вара ҫывӑхри пӗвере е ҫырмара конькипе ярӑнаттӑмӑр, хурӑнран ӑсталанӑ йӗлтӗр ҫине тӑрса Лащӑ юхан шыв тӑрӑх Тутарстанри Пӑва районне кӗрекен Тутиел ялӗ патне ҫитиех чупаттӑмӑр. Хамӑр ялти шкулта 40-50 ҫул каялла физкультура учителӗсем тӑтӑшах улшӑнатчӗҫ. Пире ун чухне нимӗнле ятарлӑ пӗлӳ илмен, анчах та иртнӗ вӑрҫӑра палӑрнӑ саппасри кӗҫӗн офицерсем вӗрентнӗ. Вӗсем хӑшӗсем футболпа та, баскетболпа та, хоккейпа та кӑсӑкланман. Апла пулин те эпир, Сидоровсем, атте тӑрӑшнипе мӗн пӗчӗкрен спорта юратса ӳснӗ.

1958 ҫултаччӗ пулас, кӑрлач пуҫламӑшӗнче аслӑрах юлташсем чӑнкӑ ҫыранра юр купаласа хӑйне евӗрлӗ трамплин турӗҫ. Пуҫларӑмӑр вара тупӑшма – кам аяккарах йӗлтӗрпе сикет. Хӑшӗ-пӗри 5-6 метр тӑршшӗне сикме пултарчӗ. Пирӗн харсӑр Вася вара пӗррехинче ҫичӗ метра яхӑнах сикрӗ, анчах та йӗлтӗрӗсем хӗresленсе кайнине пула питӗ мелсӗр ӳкрӗ те сылтӑм урине хуҫса пӑрахрӗ. Ун чухне шӑллӑма киле пысӑк ҫунашкапа туртса килнӗччӗ. Тепӗр кунне ӑна район центрне – Елчӗк больницине ӑсатрӑмӑр. Больницӑран кӑларсан та Вася килте пӗр уйӑх ытла гипспа выртрӗ. Шӑпах ҫав вӑхӑтра, йывӑҫ кравать ҫинче йӑваланнӑ май, айван содержаниллӗ ача-пача сӑввисем ҫырма пуҫларӗ. Тата пӗр пӗчӗк альбом картинӑсем ӳкерсе тултарчӗ. Паллах, кӗнеке вулама питӗ юрататчӗ Вася.

1960-1961 ҫулсенче пирӗн шкулта чӑваш литературине Р.А.Чепунов вӗрентрӗ. Эпир хаваспах Роман Андреевич ертсе пынӑ литература кружокне ҫӳреттӗмӗр, хамӑр алӑпа ҫырса «Сунтал» журнал кӑлараттӑмӑр. Пӗр ӳстермесӗрех калатӑп, халӗ Шупашкар районӗнче пурӑнакан педагогика ӗҫӗн ветеранӗ тата паллӑ ҫыравҫӑ Роман Чепунов пирӗн пурнӑҫра тарӑн йӗр хӑварчӗ.

Василин пӗрремӗш сӑввисем шӑп хӗрӗх пилӗк ҫул каялла районти «Колхоз ялавӗ» (халӗ – «Елчӗк ен») хаҫатра пичетленме пуҫланӑ. 1966 ҫулта вара унӑн темиҫе сӑввине республикӑри «Пионер сасси» хаҫатра кӑларнӑ. Ҫав ҫулах шкулти стена хаҫачӗн художникӗ, 10-мӗш класра вӗренекен В.Сидоров хайӗн карикатурӑллӑ ӳкерчӗкне «Капкӑн» журнала ярса панӑ. Кунта та ӑш пиллӗн йышӑннӑ, маттур яша малашне тата тухӑҫлӑрах ӗҫлеме хавхалантарнӑ.

Лаш Таяпа тӑрӑхӗнчен ӳнер ӑстисем нумай тухнӑ. Кунти вӑтам шкула Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ художникӗ Николай Енилин, пӗр тӑван Юрий тата Олег Ксенофонтовсем вӗренсе пӗтернӗ. 40-50 ҫул каялла вара пирӗн яла Мускавран ватӑ ӑста Иван Дмитриев-Эльмек ятарласа килсе ӗҫлетчӗ, ӳкеретчӗ. Вӗсенчен тӗслӗх илсе Вася та ӳнер тӗнчипе яланлӑхах туслашнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ вӑл вун пӗр класс пӗтерсенех Чӑваш педагогика институчӗн ӳнерпе графика факультетне вӗренме кӗчӗ.

Унӑн чи юратнӑ поэчӗсенчен тата художникӗсенчен пӗри вилӗмсӗр «Нарспи» поэма авторӗ К.В.Иванов пулнӑ. Хӑйӗн диплом ӗҫне те

вăл «Нарспири» çăл умĕнчи сыпăка аса илсе РСФСР халăх художникĕ Н.В.Овчинников профессор ертсе пынипе «Пусă умĕнче» картина ӳкернĕ. Экзамен комиссийĕнче ăна «5» паллăпа хакланă.

Василий педагогика институтĕнче вĕреннĕ вăхăтра Чăваш патшалăх университетĕнче «Çил çунат» литература пĕрлешĕвĕ лайăх ĕçленĕ, каччă унта çӳренĕ. Çамрăк поэтсенчен ытларахăшĕ – Раиса Сарпи, Любовь Мартьянова, Любовь Федорова, Афалек Энтепе, Герман Желтухин, Егор Ядыков, Василий Кервен, Николай Кушманов тата ыттисем те – шăпах çак университетра вĕреннĕ. Василий яланах вĕсемпе туслă пулнă, хайĕн сăввисене çулленех «Çеçпĕл çеçкисем» сборникре пичетленĕ. 1970 çулта вăл çамрăк поэтсен республикăри конкурсĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Педагогика институтне пĕтернĕ хыççăн В.Сидоров Узбекистанри Наманган хулине ĕçлеме кайма килĕшнĕ. Кунта икĕ çула яхăн политехника техникумĕнче черчени тата рисовани вĕрентнĕ. Наманганрах ăна Совет Çарне илнĕ. Çулталăк çурă хĕсметре пулнă хыççăн тăван ене таврăнчĕ. Ун чухнехи райĕçтăвком председателĕ Н.К.Архилин ăна район архитекторĕнче ĕçлеме сĕнчĕ. Пилĕк çул архитекторта ĕçлесе шкулсем, выльăх-чĕрлĕх комплексĕсем, пурăнмалли çуртсем тăвас ĕçе тӳрремĕнех хутшăннă вăл, пысăк колхозсен тĕп усадьбисен планĕсене тăвас тĕлĕшпе те нумай вăй хучĕ.

Елчĕкре ĕçленĕ чухнех Мускаври М.Горький ячĕллĕ литература институтне вĕренме кĕчĕ. Çав тапхăрта Василий Эктел ятпа сăввисене Мускаври хаçат-журналта, «Молодая гвардия» тата «Современник» издательствăсем кăларакан альманахсемпе сборниксенче пичетлеме мехел çитерчĕ.

1979 çулта вара чăваш литературинче самаях палăрнăскер çемйипе Шупашкара куçса килчĕ, чăваш телевиденийĕнче корреспондентра ĕçлеме пуçларĕ. Çĕнĕ хыпарсен кăларăмĕсене хатĕрлес тĕллевпе тăтăшах республикăн тĕрлĕ кĕтесне тухса çӳретчĕ, халăха кăсăклантаракан кăларăмсем хатĕрлетчĕ.

Унăн ача-пăча валли çырнă сăввисен пĕрремĕш кĕнеки «Тĕлĕнтермĕшсем» ятпа Чăваш кĕнеке издательствинче 1982 çулта кун çути курчĕ. Çавăн хыççăн В.Эктел кĕске вăхăтрах тата виçĕ кĕнеке кăларма мехел çитерчĕ: «Иртнĕ кун çути», «Çĕре тăнлатăп» тата «Чи хитри» (пурте сăвăсен пуххи). 1988 çулта ăна СССР писателĕсен союзне йышăнчĕç. Çав çулах Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер Василие «Ялав» журналăн илемлĕх редакторĕнче ĕçлеме сĕнчĕ.

90-мĕш çулсенче ăна проза ярса илчĕ, 1994 çулта унăн çĕнетӳ тапхăрĕнчи йывăр тата пăтрашуллă пурнăçа сăнлакан «Шавкăн» романĕ пичетрен тухрĕ. Сăввисен çăл куçĕ те типсе лармарĕ, 1999 çулта Мускавра «Грачиный город» сăвă кĕнеки пичетленсе тухрĕ.

Çак çулсенчех В.Эктел «Калем» издательство йĕркелерĕ.Ултă çул хушшинче кунта 113 кĕнеке кун çути курчĕ. Василий Петрович ытларах халиччен питех палăрса кайман, анчах та пултаруллă, паянхи кун темипе çыракан прозаиксемпе поэтсен хайлавĕсене пичетлеме тăрăшрĕ. «Калемра»,

сăмахран, Тутарстанри Павлă хулинче пурăнакан Виталий Козловăн икĕ кĕнеки, Пушкăртстанри Зинаида Сурпан, Василий Антонов, Микул Ишимбай, Аркадий Русаков, Геннадий Челпир, Василий Музыкантов çыравçăсен хайлавĕсем тухрĕç.

Издательство йĕркелесе янă хыççăн В.Эктел талăкра 12-14 сехет таранччен ĕçлетчĕ. Юлашки çулсенче вăл калавсемпе эссесем, чăнлавсем, повеçсем, «Ӳсĕр карап» трагеди тата «Пархатар» роман çырчĕ. Вĕсенчен чылайăшне «Калем» издательствăрах кăларчĕ. Хăйĕн хайлавĕсенче çыравçă вулакан патне тарăн шухăшлавĕпе, паянхи пурнăç тишкерĕвĕпе çитме тăрăшнă. Çавăнпа пурте вĕсем чĕрĕ ӳкерчĕклĕ, витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ пулатчĕç.

Мĕн чухлĕ обществăлла ĕç пурнăçламан тата вăл: Елчĕкре архитекторта ĕçленĕ чухнех районĕçтăвкомăн профсоюз комитечĕн председательне, ВЛКСМ райкомĕн членне суйланă ăна. Районти спорт ăмăртăвĕсенче яланах малти вырăнсенче пулнă. Вăл атте пекех «Колхоз ялавĕ» хаçатăн чи хастар ялкорĕсенчен пĕри шутланнă. Мĕнле майпа тата ăçтан çавăн чухлĕ вăй-хăват тата вăхăт тупнă вăл – тĕлĕнетĕп. Çак ыйтăва пĕррехинче савнă мăшăрĕ Людмила Ефстафьевна çапларах хуравланăччĕ:

– Унăн яланах çирĕп кун йĕрки пулнă. Ирхине шăп пилĕк сехетре вăранатчĕ те стадиона физзарядка тума каятчĕ. Унтан килсен, çăвăннă хыççăн кофе ĕçетчĕ, вара сехетрен кая мар сĕтел хушшинче ĕçлесе ларатчĕ. Эпĕ вăл мĕн çырнине нихăçан та тĕрĕслемен. Апла пулин те чухлаттăмччĕ, çав вăхăтра Вася, никам та кансĕрлемен чух, пĕр-пĕр сăвă е хайлав шăрçаласа хуратчĕ...

«Пархатар» роман çырма пуçласан Василий çăмăл автомобиль туянчĕ. Çĕнĕ хайлавăн тĕп геройĕсем Етĕрне тата Элĕк районĕсенче пурăннă, çавна май кашни эрнере тенĕ пекех Сăр тата Мăн Выла тăрăхне кайса килетчĕ. 2004 çулхи хура кĕркунне пĕтĕм машинине кĕнекесем тултарса Тольяттире тата Нурлат тăрăхĕнче пурăнакан çыравçăсен кĕнекисене леçме кайрĕ вăл. Çак çул çӳреврен таврăннă чухне каçарахпа вĕтĕ пăрпа çумăр çунă, шоссе çулĕ пăрлакланма пуçланă. Итлесшĕнех пулман çавăн пек лару-тăрура сахал опытлă водителе машина. Хусана çитме çĕр çухрăма яхăн юлсан «Жигули» пысăк канава çаврăнса ӳкнĕ, аманнă Василий вара унтах çĕр каçнă.

Çавăн пек пысăк пăтăрмах хыççăн Василий Петрович час-часах чирлеме, пĕр-пĕр явaплă ĕçе вăхăтра тăвайманшăн чăркăшма пуçлатчĕ. Иртен пуçласа сĕм каçчен нумай ĕçленине пула канăçне çухатнăскерĕн чĕри сисĕнмесĕрех хавшама пуçланă. Ăш-хырăмпа та аптрама пуçларĕ вăл. 2005 çулăн пĕрремĕш çур çулĕнче тĕп хула больницисенче те виçĕ хутчен сипленчĕ, анчах усси пулмарĕ – çурла уйăхĕн варринче вăл яланлăхах куçне хупрĕ.

Ĕмĕчĕсем ытла та пысăкчĕ Эктелĕн. Тата темиçе кĕнеке кăлармалăх материал хатĕрлесе çитернĕччĕ, «Калем» издательствăн ĕçне çӳллĕрех шая çĕклесшĕн тăрăшатчĕ. Шел ĕнтĕ, çĕнĕ ĕмĕр пуçламăш-

ӗнче хӑйне хӑй кирлӗ пек упраймасӑр пиртен вӑхӑтсӑр уйрӑлса кайрӗ манӑн канӑҫсӑр шӑллӑм.

Унпа сыв пуллашма пан улми сӑпасӗн хӗвеллӗ кунӗнче вӑл пурӑннӑ Ахазов урамӗнчи ҫурт патне ҫыравҫӑсемпе ӳнер ӑстисем, тӗрлӗ министерствӑпа ведомствӑсен, хуласемпе районсен, предприятисемпе хуҫалӑхсен яваплӑ ӗҫченӗсем, ӗҫпе вӑрҫӑ ветеранӗсем, тӑванӗсемпе ҫывӑх юлташӗсем, кӳршисем пуҫтарӑнчӗҫ. Хӑй ыйтнине шута илсе Василие Лаш Таяпари масарта пытартӑмӑр. Тӑван ялта. Унӑн вил тӑприйӗ ҫывӑхӗнчех Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ художникӗ, паллӑ скульптор Ю.И. Ксенофонтов, РСФСР тава тивӗҫлӗ учителӗ О.М.Ятманов, Елчӗк районӗнче «Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ ветеринари врачӗ» хисеплӗ ята чи малтан тивӗҫнӗ П.Н. Князев, ҫӗршывӗпе паллӑ агроном С.И. Иванов, Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ механизаторӗ, ҫывӑх юлташӗ Г.И.Арефьев ӗмӗрлӗхех канлӗх тупнӑ.

Василий Петрович яланлӑхах ҫутӑ тӗнчепе сыв пуллашнӑранпа кӑҫалхи ҫурла уйӑхӗн 17-мӗшӗнче пилӗк ҫул ҫитет. Вӑхӑт сисӗнмесӗрех малалла шӑвать. Аллӑ ҫул та, ӗмӗрсем те иртӗҫ, анчах та чӑваш ӳнер тӗнчинче, культурипе искусствинче пархатарлӑн палӑрса юлнӑ Василий Эктел сӑнарӗ нихӑҫан та манӑҫмӗ.

Петӗр ЛАШТАЙ



*Петр Васильевич Сидоров ывӑлӗсемпе: Петр (Лаштай), Анатолий, Василий (Эктел)*